# Кĕнеке «иккĕмĕш çăкăр» пекех

***Чăваш Республикин Наци библиотеки – кĕнекесемпе пичет кăларăмĕсене упракан, район-хулари вулавăшсене тĕрлĕ пулăшу паракан, информаципе тивĕçтерекен пысăк учреждени, вăл наукăпа методика центрĕ пулса тăнă. Вулавăш ачасемпе ашшĕ-амăшне, студентсемпе вĕрентекенсене, тĕпчевçĕсемпе çыравçăсене, вулама юратакансене пĕрлештерсе тăрать.***

Наци библиотеки уçăлнăранпа кăçал 150 çул çитрĕ. Çак пулăма халалласа вулавăшра тĕрлĕ мероприяти ирттерме палăртнă: регионсен хушшинчи форум, библиотекарьсемпе çыравçăсем валли семинарсем, районсенчи вулавăшсенче куравсем, ытти регионти чăвашсем валли «Пĕрле вулатпăр» акци, çамрăк вулакансемпе аслă ӳсĕмрисен тĕлпулăвĕ… Роза Лизакова директор библиотекăна аталантарас тĕллевпе ĕçе çĕнĕлĕхсем кĕртме шухăшлать. «Вулавăшра коворкинг зонисене йĕркелĕпĕр, вулав залĕсене икке уйăрăпăр. Пуçарулла студентсемпе çамрăк предпринимательсене курса калаçмалли вырăн туса парасшăн. Чăваш кĕнекисемпе хаçат-журналне цифрăна куçарас ĕçе тăсăпăр. Электронлă библиотекăпа усă куракансен йышĕ ӳссе пырать. Библиотека архивĕнче упранакан ĕлĕкхи кĕнекесене вулакан умне кăларасшăн, вĕсем паянхи çынсемшĕн питĕ кăсăклă пулма тивĕç», – терĕ Роза Михайловна.

Мероприятисен программи «Ăслăлăхпа çут ĕç ĕçĕнче – 150 çул» курав уçăлнинчен пуçланчĕ. Унта 19-20-мĕш ĕмĕрсенче кун çути курнă кĕнекесене, хаçат-журнала тăратнă, çавăн пекех библиотекарĕн ĕлĕкхи тата хальхи ĕç вырăнĕпе, учрежденин наградисемпе, ĕçре усă куракан çĕнĕ технологисемпе паллашма пулать. Выставкăра архивсенче, музейсенче упранакан кĕнекесемпе документсем, картинăсем вырăн тупнă. Чăваш кĕнеке издательстви кăларнă кĕнекесене те алла илме май пур. Тĕслĕхрен, Шопенгауэрăн 1880 çулта тухнă «Философийĕ», Артур Шницлерăн çырнисен пуххи… Маркетингпа инновацисен пайĕн пуçлăхĕ Надежда Егорова каланă тăрăх, куравра 150 çулта библиотека епле аталанса улшăнса пынине курма пулать. «Выставкăна тăратнă экспонатсем вулавăш кун-çулне кăна мар, республикăн, Шупашкарăн историне сăнлаççĕ.

Йăлана кĕнĕ йĕркепе библиотекăра «Хисеплĕ вулакансен билетне» параççĕ. Ăна кăçал ЧПУ доценчĕ Алексей Карпов, Алевтина Долгова ăсчах, Олег Улангин дизайнер, Александр Магарин журналист, Ирина Булыгина тухтăр тивĕçрĕç. Алексей Карпов республикăри тĕп вулавăша чиркӳпе танлаштарчĕ: «Культура керменне килсен чун хĕпĕртет, кăмăл çĕкленет. Унтан эпĕ ырă туйăмпа тухатăп. Вăл пирĕншĕн иккĕмĕш кил пулса тăчĕ. Эпĕ библиотекăна ялан савăнса килетĕп», – терĕ Алексей Петрович. Вăл вулавăшпа тахçанах çыхăну тытать. Библиотека ĕçченĕсем çамрăксене тĕрлĕ проекта пурнăçа кĕртме пулăшаççĕ, экспертсем валли калаçу лапамĕ йĕркелеççĕ.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ĕçченĕ Алевтина Долгова каланă тăрăх, наука учрежденийĕ Наци библиотекипе тахçанах килĕштерсе ĕçлет. «Акă нумаях пулмасть библиотекăпа тата ЮНЕСКО представительствипе пĕрле чăваш чĕлхине упраса хăварассипе тата аталантарассипе çыхăннă ыйтупа конференци ирттертĕмĕр. Ку вулавăшра ăсчахсене пулăшса пыракан пултаруллă, ырă кăмăллă çынсем тăрăшаççĕ. Библиотекăна студент çулĕсенчех çӳреме тытăннă. Наци библиотекин фончĕ пуян. Унпа усă курса нумай çыннисем тĕпчев ĕçĕсем хатĕрлеме пултараççĕ. Пĕлтĕр карантин вăхăтĕнче килте ĕçленĕ чухне библиотекăн электронлă базипе усă курса чăваш чĕлхин аталанăвĕпе çыхăннă ыйтупа пысăк статья çыртăм. Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче кун çути курнă кĕнекесене, хаçат-журнала вулама май килчĕ», – терĕ Алевтина Петровна.

Паянхи библиотекăн çитĕнĕвĕ унта ĕçлекенсен тăрăшулăхĕнчен нумай килет. Культура министрĕ Светлана Каликова библиотека пурнăçпа тан пынине палăртнă май вулавăшра чи ăста та хастар çынсем ĕçленине çирĕплетрĕ. Акă ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Роза Степанова вулавăшра 20 çул ытла вăй хурать. Муркаш районĕнчи Йӳçкасси хĕрĕ шкулта вĕреннĕ чухнех библиотекарь пулас ĕмĕтпе çунатланнă. Ĕмĕте пурнăçа кĕртес тĕллевпе Çĕрпӳри культура училищинче, Хусанти культура институтĕнче пĕлӳ илнĕ.

«Ачаран кĕнеке вулама юрататăп. 1-мĕш класа çӳреме пуçласанах ялти библиотекăна çырăнтăм. Хальхи проза хайлавĕсене уйрăмах кăмăллатăп. Чăваш çыравçисен кĕнекисене нумай вулатăп. Нумаях пулмасть Валентин Савелькинăн «Элчелне» вуларăм. Кĕнеке – чун апачĕ, «иккĕмĕш çăкăр» пекех вăл. Кĕнеке вуламасăр пурăнма çук. Вăл ăс-тăна пуянлатать, тавра курăма аталантарать. Эпĕ библиотека тытăмĕнче 1981 çулта ĕçлеме пуçланă. Çав тапхăртанпа кунта нумай улшăну пулса иртрĕ. Ĕлĕк пĕтĕмпех алăпа çыраттăмăр. Калăпăр, «Хыпар» хаçатра тухнă кашни статьяна тема тăрăх уйăрса каталога кĕртеттĕмĕр. Халĕ çĕнĕ технологисемпе усă куратпăр, компьютер пирĕн ĕçе çăмăллатрĕ. Библиографи кăтартмăшĕсене йĕркелесе пыратăп. Чăваш çыравçисен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе çыхăннă кăтартмăшсене хатĕрлетĕп. Калăпăр, 2014 çулта «Чăваш литературоведенийĕпе критики» кăтартмăш кун çути курчĕ. Хальхи вăхăтра Юхма Мишшипе çыхăннă материалсене пухатăп», – терĕ Роза Васильевна.

**Андрей МИХАЙЛОВ**

## ИСТОРИРЕН

**Шупашкарта пурăннă хастар çынсем тăрăшнипе 1871 çулта хула библиотеки уçăлнă. Пĕрремĕш çулах вулавăш валли 8 журнал çырăнса илнĕ, кăштах кĕнеке туяннă. Тепĕр тапхăртан кĕнеке фончĕ энциклопеди словарĕн 13 томĕпе, вырăс энциклопеди лексиконĕн 14 томĕпе тата ытти кăларăмпа пуянланнă. 1872 çулта хула хыснинче библиотека валли 60 тенкĕ уйăрнă. Вулакансем илемлĕ литературăна ытларах кăмăлланă. Сăмах май, çав тапхăрта вулакансен шутĕнче хĕрсемпе хĕрарăмсем ытларах пулнă. 1892 çулта библиотекăна субсиди уйăрнă, çавна май унта ĕçлекен уйрăм çынна çирĕплетнĕ. 1900 çул тĕлне вулавăшра – 3987, 1910 çулта 4664 кĕнеке пулнă. Малтан вулавăш пĕр пӳлĕмре кăна вырнаçнă. 1889 çулта тепĕр пӳлĕм панă, унта вулав залне уçнă. 1918 çулта библиотекăсене вĕрентӳ тытăмне куçарнă хыççăн вулакансен шучĕ 760-а çитнĕ. Чăваш автономи облаçне йĕркелесен библиотека валли Карл Маркс урамĕнчи çуртра темиçе пӳлĕм уйăрнă. Вулав залне 50-60 çын вырнаçнă. Ун чухне библиотекăра 4 çын ĕçленĕ. 1938 çулта хула вулавăшне республика библиотекин статусне панă.**



cap.ru сăн ӳкер…